*Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!*

# СУНТАЛ

## ҪАНАШ СОЙУСӐН шурналӗ

## № 12

ШУПАШКАР, 1925 ҫул.

# СУНТАЛ

12 (18)-мӗш №

1925 ç. Текнапӗр уйӑхӗ.

«КАНАШ» çумӗнђе тухаҭ.


Алентей.

## 1905-мӗш çулхи ревођутси.

Раççейри ӗçлекенсемпе хресђенсен пӗрремӗш ревођутси пулни çирӗм çул ситрӗ. Кӑçал Раççейри ӗçлекенсемпе хресђенсем 1905 мӗш çулта хӑйсем патша правиттӗлствине сирпӗтесшӗн кӗрешнине асӑнаççӗ.

Мӗншӗн кӗрешнӗ ун ђухне? Мӗн кирлӗ пулнӑ вӗсене? Ђи малтанах, ӗçлекенсем те, хресђенсем те ирӗке тухасшӑн кӗрешнӗ. Ӗçлекенсем хӑйсен йӑвӑр пурнӑçне çӑмӑллатма, нушаран хӑтӑлма тӑрӑшнӑ. Хресђенсем çӗрсӗр аптӑраса, темӗн ђухлӗ кулантайсем тӳлесе асапланса пурӑннӑ пирки кӗрешнӗ. Ӗçлекенсем ӗç кунне 8 сехете çитиђђен ђакарасшӑн, ӗç хакне çын пек пурӑнма çителӗклӗ тӑвасшӑн тӑрӑшнӑ. Хресђенсем улпут-хуçа çӗрӗсене хӑйсене илесшӗн, темӗн ђухлӗ пысӑк кулантайсемпе налуксене пӗтересшӗн пулнӑ.

Вӑл кӗрешӳ 1905-мӗш çулта çеç пуçланман. Ӗçлекенсем те, хресђенсем те нумайранпа кӗрешнӗ. 1905-мӗш çулта пурнӑç ђӑтма çук ытла хӗсӗнсе çитнипе вӗсем ревођутси тапратнӑ. Ревођутсине çав вӑхӑтра пулнӑ Японпа вӑрçи те сывӑхартнӑ. Мӗншӗн тесен патша правиттӗлстви йут çӗрсемпе пуйас шухӑшпа тата пӑлхавма пуçлакан халӑха вӑрçӑ майӗпе лӑплантарас шухӑшпа пуçланӑ вӑрçӑ ӑнӑçлӑ пулман. Патша çарӗсене Япунсем кашни кӗтеорех çӗмӗре-çӗмӗре тӑкнӑ. Вӑрçӑ пирки пурнӑç нађарланса пынӑ. Çапла вара пӑлхавсем пуçланса кайнӑ. Патша Раççейне Япунсем çӗнтерсе пыни халӑха патша правиттӗлствине çӗнме май пуррине те кӑтартрӗ.

Авђах ӗçлекенсемпе хресђенсем хӑйсен йӑвӑр пурнӑçӗ камран килнине малтан лайӑхах пӗлеймен. Питӗрти ӗçлекенсем январӗн 9-мӗшӗнђе (киввипе) турӑшсемпе ђиркӳ ялавӗсем йӑтса патша патне пулӑшу ыйтма кайни те пулнӑ. Хапрӑк-савӑт хуçисем, ђиновниксемпе политсисем айӑплӑ пулӗ, патша пирӗн йӑвӑр пурнӑçа аванлатма пулӑшӗ, тесе шутланӑ вӗсем. Патша, ӗçлекенсен ыйтнисем çинђен итлес вырӑнне, вӗсене хирӗç пӑшалсемпе, пулеметсемпе пертернӗ. Халӑх тӗрлӗ çӗрелле тарма тапратнӑ. Патшаран пулӑшу илес вырӑнне, ӗçлекенсем хӑйсем хушшинђе çынсем виле-виле выртнине курнӑ. Патша вӑл кун пин çын ытла вӗлерттерӗ.

Çавӑнпа пӗрлех патша çине шанасси те пӗтнӗ. Çав кунах ӗçлекенсем хӗçпӑшал тытса политсисемпе çапӑçма пуçланӑ. Патша йӗркипе кӗрешме кирлине ӗçлекенсем çавӑн ђухне пӗтӗмпех ђухласа илђӗç.

Питӗрте ӗçлекенсене персе вӗлернине илтсен, ытти хуласенђи ӗçлекенсем те пастовккӑсем тума пуçларӗç. Унтан хресђенсем улпут çурђӗсене çунтарма, вӑрмансене тустарма тапратрӗç. Çарпа флот та ӗçлекенсемпе хресђенсем пӑлханнӑ вӑхӑтра лӑпках тӑмарӗ. Хура тинӗсри „Потемкин“ ятлӑ проненосетс çинђи матруссем нађђалђствӑна пӑрахӑçа кӑларса, хӑйсем хуш-

шинт̧ен пуҫлӑхсем суйласа лартрӗҫ. Унтан тата „Георгий победоносец“ вӑрҫӑ карапӗ „Потемкинпа“ пӗрлешрӗ. Тата типӗ ҫӗрти ҫарсем те, пӑлханакан ӗҫлекенсемпе хресчт̧енсене лӑплантарма йарсан, хӑйсен тӑванӗсене пемесӗр тӑнисем пулкаларӗҫ *).

Халӑх пӑлханнивт̧ен хӑраса, патша авкустӑн 6-мӗшӗнт̧е „Пулыкин тумӗ“ тесе йат панӑ ут̧рештени тума сӑмах парат̧. Ант̧ах тумӑна суйлас йӗрке те, тумӑ тумалли ӗҫсем те халӑха пӗрре те кӑмӑла каймарӗҫ. Вӑл тумӑ халӑха улталама хӑтланни ҫеҫ пулт̧ӗ. Халӑх ун хыҫҫӑн тата хытӑрах пӑлханма пуҫлат̧. Октӑпӗр уйахӗвт̧е Мускаври типокрафисент̧е ӗҫлекенсем пуҫласа йанӑ пастовккӑ пӗтӗм Раҫҫейӗпе сарӑлса кайат̧. Вӑл пастовккӑра пӗтӗм Раҫҫейри ӗҫлекенсен класӗ пӗр йӗркепе пӗрлешсе кӗрешрӗ. Халӑх хула урамӗсене хӗрлӗ йалавсемпе тухса миттӗнксем, пухӑсем турӗ. Вырӑнӗ вырӑнӗпе политсисемпе, касаксемпе ҫапӑҫрӗ. Патша правиттӗлствине сирпӗтсе ҫӗнӗ йӗрке тума кирлине ун т̧ухне пӗтӗм ӗҫлекенсем пӗлсе ҫитрӗҫ.

Ун пек вӑйлӑ пӑлхава хӗҫ-пӑшалпа ҫеҫ т̧арма ҫукине курса, патша правиттӗлстви кайалла т̧акрӗ: октӑпӗрӗн 17-мӗшӗнт̧е (ҫӗннипе 30-мӗшӗнт̧е) тӗрлӗ ирӗклӗхсем ҫинт̧ен манифес кӑларт̧ӗ. Ант̧ах тепӗр кунӗнт̧ех правиттӗлствӑ интелекентсемпе йеврейсене тулама пуҫларӗ. Ҫав хушӑра револ̧утсионерсене те хӗстерт̧ӗ. Ҫав вӑхӑтра 110 вырӑнта 4 пин ҫынна йахӑн амантнӑ.

Октӑпӗр уйахӗнт̧и пастовккӑ ӗҫлекенсем пӗрлешсе хытӑ кӗрешме пултарнине кӑтартрӗ. Вӑлах тата ҫав вӑхӑтра ӗҫлекенсем хресчт̧енсемпе пӗрлешейменнине лайӑх палӑртрӗ. Ӗҫлекенсем пол̧шевиксем йертсе пынипе пӗрлешсе кӗрешме пултарнӑ. Вӗсем ӗҫлекенсен теппутат̧ӗсен сӗвет̧ӗсем те туса хунӑ. Вӑл советсене влаҫ вырӑнне хурса, вӗсем кӑтарнипе ӗҫлесе пынӑ. Ант̧ах хресчт̧енсем хӑйсем хушшинт̧е те пӗрлешеймен. Тата питрех — ӗҫлекенсемпе пӗрлешеймен. Хӑйсем пӗрлешес майӗпе «Хресчт̧енсен сойусӗ» те турӗҫ, ант̧ах вӑл сойус есерсемпе катетсен аллине кӗрсе ӳкрӗ. Пӗтӗм хресчт̧ене пӗрлештерме пултараймарӗ. Советсемпе те ҫыхӑнаймарӗ.



Ӗҫлекенсен вӑйлӑ револ̧утсийӗ 1905-мӗш ҫулта, теккапӗр уйахӗвт̧е, Мускаври пулнӑ хӗҫ-пӑшаллӑ востани хыҫҫӑн пӗтет. Ун т̧ухне Мускаври ӗҫлекенсем алла пӑшал тытса патша правиттӗлствине хирӗҫ ҫапӑҫрӗҫ. Патша правиттӗлстви Питӗртен ҫар кӳрсе вӑл востанийе ҫӗнтерт̧ӗ.

Маларах патша правиттӗлствине хирӗҫ пуршуйсем те кӗрешет̧ӗҫ. Вӗсем хӑйсем влаҫ патне пырасшӑн тӑрӑшрӗҫ. Ант̧ах октӑпӗрӗн 17 мӗшӗнт̧и манифес туксан вӗсем шӑпах пулт̧ӗҫ. Вӑл манифес тӑрӑх вӗсем влаҫа патшапа пӗрле тытса тӑма пултараҫҫӗ. Вӗсене урӑх кирлӗ мар. Револ̧утси малалла кайсан вӗсене

*) Салтаксемпе матруссем пӑлханинӑ пулсан та, ҫар револ̧утсине малалла йама пултараймарӗ. Ун вад̧т̧и револ̧утсийе салтаксен ҫирӗп орканисьтсийӗ пулмарӗ.

сийен тума пултарайĕ. Çавăнпа пуршуйсем патша правиттĕлствине хирĕç кĕрешес вырăнне, ĕçлекекенсемпе хресҫенсене хирĕç кĕрешме пуçларĕç. Çавăнпа та теккапĕр уйăхĕнҫи хĕçпăшаллă востани ăнăçлă пулмарĕ.

Хресҫенсем ун ҫухне кĕрешме ҫарăнмарĕç. Вĕсен кĕрешĕвĕ 1906-мĕш çула та кĕрсе кайрĕ. Анҫах вăхăтра ĕçлекенсемпе пĕрлешеймен пирки, вĕсен пăлхавĕсене те пĕтерсе лартрĕç.

1905-мĕш çулхи револҫутси çĕнтерейменрĕ. Каллех патша правиттĕлстви хуçа пулса юлчĕ.

1905 мĕш çулхи револҫутси ăнăçлă пулманни: 1) ĕçлекенсемпе хресҫенсен çирĕп сойус пулмаснинҫен, 2) пуршуйсем ĕçхалăхне сутнинчен, 3) йут патшалăхри мул хуçисем патша правиттĕлствине револҫутсине сӳнтерме укçа-тенкĕ парса пулăшнинҫен—килҫĕ.

Ĕçлекенсемпе хресҫенсем, Ленин вĕрентнипе ĕçлекен Комуниссен партийĕ йертсе пынă тăрăх, 1917 мĕш çулта çĕнтерҫĕç. Улпутсемпе пуршуйсен мĕн пур йĕркине шăлса тăкма восем 1905-мĕш çулхи револҫутсирен вĕренҫĕç. Çавăнпа епĕр вăл револҫутсине асăнатпăр.

# Максим Коркки.

# Кăрлаҫăн 9-мĕшĕ.

(Пĕр татăкĕ).

Халăх тиевĕсĕн кĕркуннеки, малтанхи çилтăвăл тапхăрĕ кăшт çеç вăраҫа йанă хура хумĕ пек туйăннă; вăл малалла хуллен йухнă; çынсен кăвак ирĕсем кăпăклă-пăтранҫăк хум тăрри пек пулнă.

Куçсем йалтăр-йалтăр йăлтăртатнă, анҫах çынĕсем пĕр-пĕрин çине хăйсем çамах тытнине ĕненмен пек, хăйсенҫен хăйсем тĕлĕннĕ пек пăхнă. Çăмахсем, пĕҫĕк кăвак кайăксем пек, халăх çинҫе йавăнса тăнă.

Пĕр-пĕрин умĕнҫе тӳрре тухма тăрăшнă пек, хуллен, нии кулмасăр калаçнă.

— Урăх тӳсме май çук, ака мĕншĕн тухрăмăр...

— Ахалек халăх тапранмасĕ..

— «Вăл» [1]) ăна тăнланса илмĕ-и вара?.. тенĕ.

Пуринҫен ытла «ун» çинҫен калаçнă,—«вăл» ырă, ăшă кăмăллăскер—тăнласа илĕ, пурне те тăнласа илĕ, тенĕ пĕр-пĕрне.. Анҫах ун сăнне ӳкерсе кĕ çамахсенҫе сăрсем пулман. «Ун» çинҫен нихçан та лайăххăн шухăшламанни, ăна пурăнакан, ҫĕрĕ çын пек шутламанни сисĕннĕ, «вăл» мĕн тума кирлине, мĕн тума пултарассине те лайăххăн тăнламан. Анҫах пайан «вăл» кирлĕ пулнă, пурте вăл мĕнлине тăнлаев илме васканă, ҫăннипе мĕнлескер пулнине пĕлмесĕр, ирĕксĕрех хăйсен шухăшĕнҫе темле пысăкскер туса хунă. Шанҫăксем пысăк пулнă, вĕсен тĕреклĕхĕ вăҫҫи те пысăкскер кирлĕ пулнă.

Вăхăҫĕпе халăх хушшинҫе ҫарсăр çын сасси илтĕннĕ.

— Йулташсем! Ан улталăр хăвăра хăвăр...тенĕ.

Анҫах хăйсене хăйсем улталани кирлĕ пулнă, çавăнпа та халăх хăракаласа, çиленсе тăрук-тăрук кăшкăрнисем çын сассине хупла-хупла лартнă.

— Епĕр уççăн тăвас тетпĕр...

— Ан ҫăн есĕ!..

— Çитменнине Каппон атте...

---

[1]) «Вăл», «ун», «унăн» тесе пур çĕртре те патша çинҫен калакă.—Куçаракансем

— Вăл пĕлет мĕн тумаллине... тенĕ.

Халăх ушкăн-ушкăнăн уйăрăлса, ни кайас, ни кайас мар пек, урам варриӡе çапăнкаласа тăнă; тавлашса та калаçкаласа сĕрленĕ, пӳрт çтенисем çумне пыра-пыра тĕртĕннĕ, унтан каллех хура, шĕвĕ йапала пек урам варрине йуха-йуха тулнă—халăх хушшинӡе икkеленнĕ шухăшсем кăшт палăрмалла çеç çавăрăнса çӳрени сисĕннĕ; теме, пурне те кирлĕскере пит хытă кĕтни паллă пулнă, çав кĕтекен йапала çитес тĕлĕн çулне ĕç ăнасемне ĕненнипе çутатмалла пулнă, вăл ĕненни вара пур татăксене те шăратса пĕр çирĕп, йаштака йапала туса çыхăнтармалла пулнă.

Ĕненменнине пытарма тăрăшнă, анӡах пултарайман. Халăх ытла пыçăккăн хусканса кайни, темшĕн пăшăрханни, сас-ӡӳсене темле ытла питĕ ӳкесе тăни палăрнă. Утса пынă ӡух сыхланса итлекеленĕ, малалла пăха пăха илнĕ, куçĕсемпе темскере хытă шыранă. Хăй тулашĕнӡи вăйа мар, хăй ăшĕнӡи вăйне ĕненекенсен сассисем халăха хăратса, çилентерсе йанă, хăй курасшăн пулнă вăйпала уççăн тавлашма тивĕçлине ĕненекен çыншăн ӡав хăрани, çиленнисем пĕре те килĕшмен.

Анӡах, урамран урама йухса, халăх пит хăвăрт нумайланса пынă. Çав тулашĕнӡен ӳсни йерипен шалтан ӳсниме сисĕнтернĕ, ӡура халăхĕн хăй иуштиве влаçа астутарма тивĕç пурри çинӡен шухăшлаттарнă.

— Кирек мĕнле пулсан та, епĕр те çынсемех...

— «Вăл» тăнлавса илет пулĕ-çке,—епĕр ыйгатпăр...

— Тăнланса илме кирлĕ!.· Пăлханмастпăр епĕр..

— Тата Каппон атте те...

— Йулташсем! Ирĕке ыйтса илмеççĕ...

— Ах, туршăн та!..

— Ӡарăн-ха есĕ!..

— Хăвалăр ăна, усала, айаккалла!..

— Каппон атте лайăхрах пĕлет мĕн тумаллине... тенĕ.

Хура паӡттуллă çӳлĕ çын, хулпуççийĕнӡе хĕрлĕрех саплăклăскер, йупа çине хăпарса тăвă та, кукша пуçĕнӡен çĕлĕкне хывса, хыттăн, ӡаплăн калама тытăннă. Куçĕсем вут пек йăлтăртатнă, сасси ӡĕтренĕ. Вăл «ун» çинӡен калана.



Анӡах сăмахĕсенӡе те, йепле каланинӡе те малтан темле йури çĕкленсе калани сисĕннĕ, ун сăмахĕнӡе ыттисене йерме пултаракан, хăватсемех туса йаракан шухăш илтĕнмен. Тахçанах ӡĕрĕ шугĕнӡен тухнă, вăхăт киветсе пăракнă, сăнсăр йапалана тепĕр хут ӡĕртсе аса илме хăтланса, çын хăйне хăй прĕксĕрленĕ пек пулнă.

«Вăл» йаланах, пĕтĕм ĕмĕр тăрăшшипех, çынтан айакра тăвă, анӡах халĕ кирлĕ пулса ларнă—ун ăшне çын хăй шанӡăкĕсене кӳртесшĕн пулнă.

Халăх лайăх итлесе тăнă—çын хăй сăмахĕсенӡе халăх ĕмĕӡĕсене каланă, халăх ăна сиснĕ. Анӡах „ун“ вăйне йумахри пек шутлани ун сăнсăпаӡĕпе пĕртте килĕшмен пулсан та, пурте ун пек вăй пуррине, пулма кирлине пĕлнĕ. Çав вăйа [1]) хăвăртрах шыраса тупас пулнă—ерагтăр ăна карттинеем тăрăх пурте пĕлекен çын пек туса хунă, йумаксем тăрăх пĕле-

[1]) Патшана.

кен сăнпа пĕрлештерне, йумахсенçе çав сăн етемлех пулнă. Ораттăрăн йалтăракан, ăнланмалла сăмахĕсем парăнтаракан, ырă, тĕрĕс тăвакан, халăх нуштине ашшĕ амăшĕ пек аставакан çын сăнне ăнланмалла ӳкернĕ.

Йенеӳ киле пуçланă, çынсене ыталанă, кăшт хумханса илнĕ пуç тăнĕ хусканнине пĕтерсе лартса, иккеленнĕ шухăшсем шăппăн пăшăлтатнине хупласа хурса, çав йенеӳ çынсене хăпартлантарса йанă... Çынсем таççанах кĕтнĕ кăмăла парăнма васканă, вĕсем пĕр пĕрне пăçăртса пĕр шухăшлă кĕлеткесенçен тем пысăккăш купа тунă; таçă тăни, хулпуççисемпе айаксем çивăххи çĕресене ăшăтнă, тата ĕç ăнассине шанни те ăшă панă.

— Кирлĕ мар пире хĕрлĕ йалавсем! тесе кăшкăрнă кукша пуçлă çын. Фĕлĕкĕпе сулкаласа вăл халăха йертсе пынă. Унăн çара пуç çашкийĕ тĕкĕмĕсн сутăлнă, çын куçĕсем укĕвçе йарăна-йарăна хăй йеннелле пăхтарнă.

— Епĕр атте патне кайатпăр!..

— Çапла!

— Ененетпĕр ăна!..

— Мăшкăлама памĕ! тенĕ çынсем.

— Йулташсем! Хĕрлĕ тĕс—пирĕн йун тĕсĕ, тесе халăх çинçе пĕр пĕççен уçă сасă кугăнлашса йанăрса тăнă.

— Хăй вăйĕсĕр пуçне, халăха ирĕке кăларакан урăх вăй çук, тенĕ.

Кăмăлĕ-шухăшĕпе ӳсĕрĕлсе кайнă халăх, йулашкинçен кăмăлĕ килсе хыттăн ыталанăран хĕпĕртесе кайнăскер,—харкашса тăнă.

— Кирлĕ мар!...

— «Вăл» ăнланĕ.

— Акă çын, ех есĕ...

— Ун патне йараççĕ пулсан...

— Халăха пăтратакансем, шуйттансем!

— Каппон атте хĕреспе, а вăл—йалавпа.

— Çамрăк-ха, çапах пуç пуласшăн...

— Епĕр килĕшӳллĕ тăвасшăн! тенĕ.

Сахалтарах ĕненнисем хыçалтарахра пырса çиленкелесе те, хăракаласа кăшкăрнă.

— Хăвалăр ăна, йалавлине! тенĕ.

Хаç хыттăн, ним иккеленмесĕр шунă, кашни утăм тумассеренех хăйсене хăйсем улталас мухмăрне, пĕр кăмăллăхне тата хытăрах пĕр пĕрне йертсе пынă. «Унăн» хаç анçах туса хунă сăнĕ ĕлĕк пулнă ырă паттăрсен мĕлкисене—аçа çухве илтĕ йумахсенçен кăшт тăрса йулнăскерсене хыттăн аса илтернĕ, çынсем ĕненме тăрăшнă çĕрĕ вăйпа тулса пынă та, вĕсен пуçĕнçе ним çарусăр ӳснĕ...

Тахăш пĕри:

—«Вăл» пире йуратать!.. тесе кăшкăрнă.

Халăх çав хăй хаç анçах тунă йапала йуратнине çăнахах çĕрсен ĕненнĕ. Нумайĕшĕ хăйсем çĕртиĕ çуртура çинçен шухăшласа пит хĕпĕртесе киленнĕ.

Халăх урамран шыв хĕррине, Троицки кĕперĕ патне йухса тухса, хăйне кĕпер çине кĕме çарса тăракан салтаксем кукăр макăрăн çăсăлса тăнине курсассăн,—çынсем çав çӳхе, кăвак карта пирки çарăнса тăман. Кăвак çутă сарлака çырмара лайăх курăнса тăракан салтаксенçен пĕрне хăрамалли пулман, шăннă урисене ăшăтмашкăн вĕсем сике-сике илнĕ, аллисене сулкаланă, пĕрне пĕри тĕрте-тĕрте йанă. Малта, шывăн леш йенçе, çынсем пĕр çтеттĕм çурт курнă—унта вĕсене «вăл», хуçи кĕтнĕ. Аслă та вăйлăскер, ырă та йуратаканскер, вăл хăй салтакĕсене: ман пата халăха, мана йуратаканскере, хăй вушти çинçен манпа килĕшӳллĕн калаçасшăнскере ан йаççăр, тесе хушма пултарайман ĕнтĕ.

Авçах, çапах та, нумай çын пиçĕ çинçе темскер тавçăрса илейменни вакăрнă, малта пыракан ĕсем вăраххăн утма тытăннă. Хăшĕ кайалла çавăрăнса пăхнă, хăшĕ айакалла кайса тăнă, пурте пĕр пĕрне: салтаксем çин-

ҫен пӗлетпӗр, вӑл пире тӗлӗнтермест, тесе кӑтартасшӑн пулнӑ. Хӑшӗ ҫул е хуйхӑллӑ креппӑҫ тӗлӗнҫе йӑлтӑртатса тӑракан ылтӑн анкӗл ҫине пӑхкалакӑ, хӑшӗ кулкалавӑ. Такам сасси:

— Салтаксене сивӗ!.. тесе шеллесе илнӗ.

— Н-та-а...

— Тӑрасах пулаҫ!

— Салтаксем—йӗрке тытма.

— Лӑпланӑр, аҫасем!.. лӑп тӑрӑр!

— Ут, ут!..

— Урра, салтаксем! тесе кӑшкӑрнӑ тахӑшӗ.

Хулпуҫҫинҫен сарӑ пашлик ҫыхнӑ офитсер йӗннинҫен шашкине туртса кӑларнӑ та, сывлӑшра авӑнҫӑк хурҫипе сулласа, вӑл та халӑха хирӗҫ чемскер кӑшкӑрнӑ. Салтаксем, хулпуҫҫийе хулпуҫҫи ҫумне туса, пӗр пӗрннне йунашар пӗр хускалмасӑр тӑнӑ.



— Мӗн-ха вӗсем апла? тесе ыйтнӑ пӗр самӑр хӗрарӑм.

Ӑна хирӗҫ никам та ҫӗнмен. Пурне те чемле, сасартӑк утма йӑвӑр пулса карнӑ.

— Кайалла! тесе офитсер кӑшкӑрни илтӗннӗ.

Пӗр ик-виҫ ҫын кайалла ҫавӑрӑнса пӑхнӑ—вӗсем хыҫӗнҫе тӑп таҫӑ халӑх тӑнӑ, урамран ун ӑшнелле хура ечем шывӗ татти сыпписӗр йухнӑ; халӑх, вӑл хӗстерннне парӑнса, кӗпер умӗнҫи лаптака тулса сарӑлса кайнӑ. Пӗр ик-виҫ ҫын мала тухнӑ та, шурӑ тутӑрсемпе сулса офитсере хирӗҫ утнӑ.

— Епӗр —хамӑр патша патне...

— Пӗре те пӑлханмастпӑр... тесе кӑшкӑрнӑ.

— Кайалла! Епӗ пеме хушатӑп!..

Офитсер сасси халӑх патне ҫитсен, халӑх, тӗлӗннипе, ӑна хирӗҫ кӗр кӗрлесе йанӑ. Халӑх хушшинҫе малтан та хӑшӗ: «ун» патне йарас ҫук, тесе калакаланӑ, анҫах «ун» патне лӑпкӑн, унӑн вӑйӗпе ырӑлӑхне ӗненсе пырakан халӑха пересси вӗсем тунӑ сӑна пӑсса йанӑ. «Вӑл»—пур вӑйран та аслӑ вӑй, унӑн никамран та хӑрамалли ҫук, унӑн хӑй халӑхне ытиксемпе те пуҫӑсемпе хӑйӗнчен сивӗтме нимӗ те кирлӗ мар...

Виҫӑ сӑнлӑ, хура куҫлӑ, вӑрӑм, типшем ҫын тӑрук ҫапла кӑшкӑрса йанӑ:

— Перешӗн-и? Пеме пултараймастӑн!.. тенӗ.

Унтан, халӑх йеннелле ҫавӑрӑнса пӑхса, ҫиленсе хыттӑн каланӑ:

— Мӗн?—каларӑм вӗт епӗ,—йарас ҫук вӗсем...

— Камсем? Салтаксем-и?

— Салтаксем мар, ав—лере...

Вӑл таҫта инҫетелле аллипе сулса кӑтартнӑ.

— Аслисем... Аха? Епӗ каларӑм вӗт!

— Вӑл паллӑ мар-ха халӗ...

— Мӗн тума пынипе пӗлсессӗн—йарӗҫ!..

Шавлани вӑйлансах пынӑ. Ҫиллӗн кӑшкӑрнисем, тӑрӑхласа каланисем илтӗннӗ. Ҫапер иуҫ тӑнӗ ниме кирлӗ мар картана тӗл пулса сапанса кайнӑ та, шарлами пулнӑ. Ҫынсем хытӑрах куҫкаласа тӑра пуҫланӑ.

Ҫырмаран виттӗр еивӗ ҫапнӑ. Штик тӑррисем пӗр тапранмасӑр йӑлтӑртатса тӑнӑ.

Пӗр пӗрне ђӗнкелесе, тата хыҫалтан ђышнине парӑнса ҫынсем малалла шунӑ. Тутӑрсемпе кайнисем айаккалла пӑрӑнса кӗрсе халӑх хушшивђе ҫухалнӑ. Анђах малтисем пурте,—арҫынсем, хӗрарӑмсем, ҫитӗнейменнисем те,—шурӑ тутӑрсемпе сулланӑ.

Пӗр ҫулланнӑ ҫын, кӑвакара пуҫланӑ сухаллӑскер, пысӑккӑн ҫапла каланӑ:

— Мӗн унта пӑшалпа пемелли? Мӗне кирлӗ вӑл? тенӗ.—Вӗсем кӗпер ҫине анђах йамаҫҫӗ, тӳррех пӑр ҫийӗпе кайӑр, теҫҫӗ.

Ҫавӑнтах сасартӑк сывлӑшра темскер шӑтӑр-шатӑр туса тӑкӑнса кайнӑ та, йантраса илнӗ, халӑха темиҫе теҫетке куҫа курӑнмав пушӑпа ҫапнӑ. Пӗр ҫеккунт хушши сасӑсем сасартӑк шӑнса ларнӑ пек пулнӑ. Халӑх хуллен малаллах шунӑ.

Пӗр сӑнсӑр сасӑ, те ыйтса, те ахађ:

— Пушшипе пеђӗҫ, тенӗ.

Анчах унта та, кунта та йӑвӑшнисем илтӗннӗ, халӑх урн айӗнђе темиҫе ҫын выртнӑ. Пӗр хӗрарӑм хыттӑн ахлатса, аллипе кӑкӑрне йарса тытнӑ та, малалла, хӑйне хирӗҫ ђӑсса тӑракан штиксем патнелле хӑвӑрт утса кайнӑ. Ун хыҫҫӑн тата ҫынсем ђупма пуҫланӑ, унтан татах, ун тӗлӗпе ирте-ирте, умне ђупса тухнӑ.

Унтан татах, тата хытӑрах, тата тикӗс мартарах, хӑрӑс пӑшал сасси шатӑртаттарса йанӑ. Хӳмме патӗнђе тӑракансем хӑмасем ђӗтресе кайнине илтнӗ,—тахӑшин курӑнман шӑлӗсем хӑмасене ҫиленсе ҫыртнӑ пек пулнӑ. Пӗр пуђкви тата хӳмме хӑми тӑрӑх шуса кайса, ҫын пиђӗсем ҫинелле вӗт турпас татӑккисем сиплесе тӑкнӑ. Ҫынсем виҫшерӗн, темиҫешерӗн ана-ана ӳкнӗ, хырӑмӗсене йара-йара тытса ҫӗр ҫумне кукленсе ларнӑ, уксаклаcа таҫталла ђупнӑ, йур тӑрӑх упаленнӗ.—пур ҫӗрте те йур ҫинђе ҫутӑ хӗрлӗ пӑнђӑсем пит нумай хиписа тухнӑ. Вӗсем сарӑлнӑ, куҫа хӑйсем ҫинелле пӑхтарса пӑсланса тӑнӑ. Халӑх кайалла ђакнӑ, кӑшт ђарӑнса тӑвӑ та, хытса кайнӑ, унтан сасартӑк темиҫе ҫӗр ҫын сасси тискеррӗн, ҫынна ђӗтретмелле уласа йанӑ. Улавӑ сасӑ ҫуралнӑ та, хытӑ ыратнине, тавӑрас килнине, хӑраса ӳкнине, хирӗҫ тӑнине, нимне пӗлмесӗр хуйхӑллӑ пулнине, пулӑшма ђӗннине пӗлтерекен сасӑсем пулса, сывлӑш тӑрӑх татти-сыпписӗр ула пӗлӗт пек йухса кайнӑ.

Пуҫӗсене ђиксе, ҫынсем ушкӑн-ушкӑнӑн малалла, вилнисемпе аманнисене пуҫтарма ђупнӑ. Аманнисем те макӑрнӑ, ђӑмӑрӗсемпе йунанӑ, пур ҫын пиђӗ те сасартӑк урӑхланса кайнӑ, пур куҫсенђе те темле ухмаха йернӗ пек кийех йӑлтӑртатнӑ. Анђах пӗтӗм хура хӑрушлӑха кӑтартакан панӗккӑ [1]) пулман,—ҫынсене сасартӑк тулган та, шалтан та йарса илекен, типӗ ҫулҫӑсене ҫил шӑлса купаланӑ пек, ҫынсене куҫа курӑнман тетел ӑшне шӑлса кӳртсе таҫталла сӗтӗрекен, хӑйсенђен хӑйсем тарса пытанма тӑрӑшнӑ тискер ҫавра ҫил ӑшӗнђе таҫта хӑвалаcа кайакан панӗккӑ пулман. Уҫал хӑрушлӑх пулнӑ, анђах вӑл, сивӗскер, шӑннӑ тимӗр жек пӗҫергекенскер, ђӗрене пӑрлантарнӑ, ӳт-пӗве пӑђӑртса лартнӑ, йур ҫӑтакан йун ҫине, йунланса пӗтнӗ питсем, алӑсем, тумтирсем ҫине, тата, ђӗррисем хӑраса кускаласа ҫӳренӗ хушӑра, хӑрамалла каплӗн выртакан ҫын виллисем ҫине куҫсене ђарса пӑрахса пӑхтарнӑ. Хыттӑн ђарӑхса кайни, хуйхӑллӑ-вӑйсӑр сиплӗ, аптӑранипе ытла ним тума пӗлменни палӑрнӑ, темле пӗрте выђаман куҫсем нумай пулнӑ, салхуллӑн усӑнса аннӑ куҫхаршисем, хытӑ ђӑмӑртанӑ ђӑмӑрсем, тытамак тытнӑ пек алӑ сулнисем, тата перссе йанӑ хыт сӑмахсем нумай пулнӑ. Анђах, пуринђен ытла, ҫын ӑшӗсене ђува вӗлерекен, сивӗ тӗлӗнтерӳ кӗрсе тулнӑн туйӑннӑ. Хӑйсен каймалли тӗлне лайӑх курса, вӗсем кӑшт, пӗр ик-виҫ минут малтан анђах ҫӑмӑллӑн утса пынӑ, вӗсем умӗнђе патшан йумахри сӑнӗ ђаплӑк курӑнса тӑнӑ, вӗсем ӑна пӑхса хӗкӗртенӗ, йуратса кайнӑ, унӑн хӑйсемех тунӑ илемне пӑхса ӳсӗрӗлнипе ђӗрисенђе пит пысӑк шанђӑксем уҫра-

[1]) Панӗккӑ тесе ҫынсем нимне пӗлмесӗр, шутсӑр хӑраса ӳкнине калаҫҫӗ.—Куҫаракансем.

нӑ Икӗ хутҫен харӑс пӑшал пени, йун, вилӗсем, йӑнӑшкисем—вэра ҫынсем пурте, вӑйсӑрскерсем, ҫурса пӑракнӑ ҫӗреллӗскерсем, тӗпсӗр, тӗксӗм, пушӑ вырӑн умне пырса тӑнӑ.

Темле, татса пӑрахма пулман йапалана ҫыхса лартнӑ пек, ҫынсем йӗр вырӑнта таптанса тӑнӑ; хӑшсем ним ҫӗнмесӗр, тем ӗҫ ҫинҫен шухӑшланӑ пек, аманнисене йӑтнӑ, вилӗсене пуҫтарнӑ, ыттисем, тӗлӗкре те айакра тӑнӑ пек, анраса кайса темле-ним тума пӗлмесӗр, лешсем ӗҫленине пӑхса тӑнӑ. Нумайӗшӗ салтаксене кӑшкӑрса ӳпкеленӗ, вӑрҫнӑ, алписемпе сулкаланӑ, ҫӗлӗкӗсене хыва хыва тем тума пуҫҫапнӑ, такамӑн хӑрушӑ ҫиллипе хӑратнӑ...

Салтаксем, пӑшалӗсене урисем ҫумне тӑратса, пӗр тапранмасӑр тӑнӑ, пиҫӗсем те вӗсен тапранман, пит ҫӑмарти тирӗсем хытӑ туртӑнса ларнӑ, шӑлӗсем ытла тухса кайнӑ. Пур салтаксен те куҫӗсем шурӑ, тутисем шӑнса ҫыпӑҫнӑ пек туйӑннӑ...

Халӑх хушшинҫе такам уланӑ пӗк хыттӑн кӑшкӑрнӑ:

— Йӑнӑш! Йӑнӑш пулҫӗ, тӑвансем!.. Урӑххисем вырӑнне шутларӗҫ... Ан ӗненӗр!... Кайӑр, тӑвансем... тӑнлантарса парас пулаӗ!.. Ех, турӑ... мӗн пулҫӗ-ха ку?

— Каппон ултавҫӑ! тесе ҫухӑрнӑ пӗр аҫа, хунар ҫине хӑпарса.

— Мӗнле, йултгашсем, куратӑр-и, йепле хирӗҫ тухса илеҫҫӗ пире?..

— Тӑр хаҫ... Ку йӑнӑш... апла пулма пултараймасӗ, тӑнлан есӗ ӑна! Ел есӗ етем мар?...

— Есӗр хӑвӑр ӑна етем мар, есӗр сурӑхсем, кӗтӳ, акӑ мӗнле сире...

— Иртерсе йар... пӑрӑн...

— Ҫул пар аманнӑ ҫынна!..

Икӗ ӗҫлекенне хӗрарӑм пӗр типсе кайнӑ, вӑрӑм ҫынна ҫавӑтса пынӑ; ҫынӗ пӗтӗмпех йурланса пӗтнӗ, паҫтту ҫанни ӑшӗнҫен йун йухнӑ. Пиҫӗ кӑвакарса тата пушшех шӗвӗрӗлсе кайнӑ, хуралнӑ тутисем арап тапранкаласа хуллен ҫапла каланӑ:

— Епӗ каланӑ-ҫҫӗ... йамаҫҫӗ, тесе... Вӗсем ӑна пытарса усраҫҫӗ... Мӗн вӗсене—халӑх!..

— Аҫасем... Утлӑ ҫар!

— Тарӑр!..

Салтак ҫтени хумханса, икӗ йеннелле уҫӑлакан йӑвӑҫ хапха пек, уҫӑлса кайнӑ, ун хушшипе ташласа та, харклатса лашасем иртсе тухнӑ та, офитсер кӑшкӑрни илтӗннӗ, утлӑ ҫар пуҫ тӑррине сывлӑша ҫурса шашкӑсем выҫанса илнӗ, пурте пӗр йеннелле хӑмсарса йанӑ. Халӑх ӗненмесӗр, мӗн пулассине кӗтсе, хумханса та шуйханса тӑнӑ.

Сасӑсем ҫарӑна пуҫланӑ.

— Ма-арш! тесе шутсӑр хытӑ кӑшкӑрса йани илтӗннӗ.

Ҫынсен питне ҫавра ҫил пырса ҫапӑннӑ пек, урисем айӗнҫи ҫӗр те ҫавӑрӑнса кайнӑ пек, пурте тарма тытӑннӑ, пӗр-пӗрне ҫыша-ҫыша ӳкернӗ, аманписене пӑраха-пӑраха хӑварнӑ, вилӗсем урлӑ сике-сике каснӑ. Лашасен йӑвӑр ура сассисем хӑваласа ҫитсе пуҫланӑ, салтаксем уланӑ, вӗсен лашисем аманнисем, ӳкнисем, вилнисем урлӑ каҫа каҫа кайнӑ, шашкӑсем йӑлтӑртатнӑ, вӑхӑчӗпе хурҫӑ шӑхӑрса илсе шӑмӑ ҫумне ҫапӑнни илтӗннӗ. Ҫынсем кӑшкӑрни вӑрӑмӑн йантракан йӑнӑшнӑ сасӑ пулса тӑнӑ.

— А-а-а!

Салтаксем шашкисемпе хӑмсарса вӗсене ҫын пуҫтӑррисем ҫинелле йанӑ, шашкӑпа каснӑҫем вӗсен кӗлеткисем хӑрах айаккинелле ҫалӑшнӑ. Сӑнӗсем вӗсен шыҫса кайнӑ пек, хӗрлӗ, куҫсӑр пулнӑ. Лашисем, шӑлӗсене пит хӑрушшӑн йере-йере пӑрахнӑ та, пуҫӗсене сулла-сулла кӗҫеннӗ...

Халӑха урамсене хӑваласа кӑртнӗ... Ҫавӑнтах вэра, лашасем тапӑртатни инҫете кайса ҫухалсанах, ҫынсем хашка-хашка ҫарӑвса тӑнӑ, ҫарӑлса кайнӑ куҫҫемпе пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илнӗ. Нумайӗшӗн пиҫӗсем ҫинҫе айӑплӑн кулса илни палӑрнӑ, такӑшӗ кулса йанӑ та:

— Ну, тартӑм та епӗ!.. тесе кӑшкӑрнӑ.

— Тарӑн унта!.. тенӗ ӑна хирӗҫ.

Ҫавӑнтах сасартӑк пур йенҭен те тӗлӗнсе, хӑраса, ҫиленсе калаписем сирпӗне пуҫланӑ.

— Мӗн пулҭӗ-ха ку, тӑвансем, е?

— Вӗлереҫҫӗ, православнисем!

— Мӗншӗн?

— Акӑ правиттӗлствӑ те вара!

— Касаҫҫӗ вӗт? Лашасемпе таптаҫҫӗ.

Нимне пӗлмесӗр пӗр вырӑнта ҭышӑнса тӑнӑ, хӑйсем ҫиленсе, тарӑхса кайни ҫинҭен пӗр пӗринпе калаҫнӑ, пурте вӗсем пит тарӑхса кайнӑ. Мӗн тӑвассине пӗлмен, никам та килелле уттарман, шухӑшсем арӑш пирӗшленсе кайнинҭен темле ҫул уҫса тухас тесе пулмалла, кашнийех теприн ҫумне пӑҭӑрӑннӑ, тем ҫинҭен пӗлесшӗн пулса пӗр-пӗрне ҭӑл-ҭал пӑхкаланӑ, анҭах, ҫапах та, хӑраниҭен ытла тӗлӗнсе кайнӑскерсем, теме кӗтнӗ, итлекеленӗ, кайалла ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхнӑ. Тӗлӗннипе пурте ытла пӗтсе, пусӑрӑнса ларнӑ, тӗлӗнни пур шухӑшсенҭен те ҫӳлте тӑнӑ, ҫак кӗтмен-туман, хӑрушӑ, ниме кирлӗ мар минутсенҭе, айӑпсӑррисен йунӗпе тулнӑскерсенҭе, вӑл хӑй йӗркиперех пыракан кӑмӑл-шухӑша пӗрлешме ҭарса тӑнӑ...

Ҫамрӑк, вӑйлӑ сасӑ:

— Ей, аманнисене илме! Аманнисене пуҫтарма кайӑр! тесе ҭӗннӗ.

Пурте хусканса кайнӑ, ҫырмана тухмалли ҫӗрелле хӑвӑрттӑн уттарнӑ. Вӗсене хирӗҫ урамалла аманса пӗтнӗ ҫынсем, йур ҫийӗпе упаленсе, урисем ҫинҭе тайкаланса кӗнӗ, хӑйсем йурпа йун ӑшӗнҭе пулнӑ. Вӗсене алӑсем ҫине хурса ҫӗклενӗ, исвошҭӑксене ҭарса, ларса пыраканӗсене хӑваласа антарнӑ та, аманнисене таҫта турттарса кайнӑ. Пурте ӗҫлӗ пек, салху, ҭӗнми пулнӑ. Аманнисене куҫпа виҫнӗ пек пӑха-пӑха илнӗ, ним шарламасӑр темскер виҫнӗ, танаштарса пӑхнӑ, хӑйсен умне темле паллӑ мар, кӗлеткесӗр, хура мӗлке пек тухса тӑракан хӑрушӑ ыйтӑва хирӗҫ мӗн калассине тарӑна кайса шыранӑ... Ҫав ыйту хаҭ анҭах шухӑшласа кӑларнӑ керойӑн, ырлӑк паракан, уҫӑ кӑмӑллӑ патшан сӑнне пӗтӗмпех хупласа пӗтерсе лартнӑ. Ҫав сӑн пӗтсе ларни ҫинҭен хӑш-хӑшӗ анҭах сӑмахпа калама хӑйнӑ. Ун ҫинҭен калама йӑвӑр пулнӑ,—апла калани вӑл хӑвӑн пӗртен пӗр шанҭӑкна ҫухатни пулать...

Хӗрлӗрех саплӑклӑ паҭтту тӑхӑннӑ кукша пуҫлӑ ҫын утса пынӑ, унӑн тӗкеӗм пуҫ ҭашкийӗ халӗ йунпа сӑрланнӑ, вӑл хулпуҫҫипе пуҫне усса йанӑ, урисем аран утнӑ. Ана кӑтра пуҫлӑ, ҫӗлӗксӗр, сарлака хулпуҫҫиллӗ йӗкӗтпе ҫӗтсе пӑрахнӑ кӗрӗклӗ, сансӑр хӗрарӑм ҫавӑтса пынӑ.

— Ҭим-ха, Михаҭа... йепле ӗнтӗ халӗ? тесе мӑкӑртатнӑ аманнӑ ҫынӗ. Хушмасӑр халӑха пеме... йурамасть... Апла пулмалла мар, Михаҭа, тенӗ.

— Пулмӑ ҫав! тесе кӑшкӑрнӑ пӗри.

— Пеҭӗҫ те... касрӗҫ те... тенӗ хуйхӑллӑн хӗрарӑмӗ.

— Апла пулсан, Михаҭа, пемешкӗн приккас пулнӑ...

— Пулнӑ ҫав! тесе ҫиленсе кӑшкӑрнӑ йӗкӗҭӗ. Санпа каласса тӑраҫҫӗ тени есӗ? Пӗр стаккан ерех тыттарӗҫ тени?

— Ҭим-ха, Михаҭа...

Аманнӑ ҫынӗ ҭарӑнса тӑнӑ та, ҫурӑмӗпе стена ҫумне тайӑнса, хыттӑнрах калаҫа пуҫланӑ:

— Православнисем!.. Мӗншӗн пире вӗлереҫҫӗ? Мӗнле саккун ҫтӑрӑх?.. Кам хушнипе? тенӗ.

Ҫынсем пуҫӗсене усса ун тӗлӗпе ирте ирте кайнӑ.

Тепӗр ҫӗрте, хӳмме патӗнҭе кӗтесре темиҫе вунӑ ҫын пухӑннӑ та, вӗсем хушшинҭе такамӑн хӑвӑрттӑн тухакан, пӑҭлана-пӑҭлана ларакан сасси ҫиленсе йантранӑ:

— Каппон ӗнер министӑр патӗнҭе пулнӑ, вӑл мӗн пулассине пурне те пӗлнӗ, апла пулсан—вӑл пирӗн ултавҫӑ, вӑл пире вилме илсе карӗ.

— Мӗн усси ӑна?

— Кнӗ пӗлетӗп-и мӗн?

Пур ҫӗрте те хумхану кыпса иле пуҫланӑ, пурин умне те уҫах мар ыйтусем сике-сике тухнӑ, анҭах вӗсем писӑккине, тарӑннине, хайарринe,

вӗсем хирӗҫ ответ хыттӑн ыйтнине кашнийех сиснӗ. Тултан пулӑшасскне ӗненни, вуштаран хӑватлӑн хӑтаракана шанни хумхану вуҫӗ ӑшӗнҫе тата хӑвӑртрах ҫунса кӗллевсе пӗтнӗ.

Урам варрипе пӗр тулли ӳтлӗ, наҫар тумлӑ, ырӑ змӗш сӑнлӗ, хуйхӑллӑ ысӑк куҫлӑ хӗрарӑм пынӑ. Вӑл йунланса пӗтнӗ сулахай аллине сылтӑммипе тытса макӑрнӑ та, ҫапла каланӑ:



— Акӑ, амантса йаҫӗҫ... Мӗнле ӗҫлӗп? Аҫасене мӗнле тӑрантарас?... Кама ман кайса ӳпкелес? Православнисем, патша та хирӗҫ ыраҭ пулсассӑн, ӑҫта-ши халӑх хутне кӗрекенсем? тенӗ.

Унӑн уҫӑ, хыттӑн каланӑ сӑмахӗсем ҫынсене вӑратса, хускатса йанӑ пек пулнӑ. Ун патне хӑвӑрт ута-ута пынӑ, пур йенҫен те ҫупнӑ, ҫарӑнса тӑрса ун сӑмахӗсене салхуллӑн тӑнласа итленӗ.

— Апла пулсан, халӑхшӑн саккун ҫук?

Хӑшсем йӑвӑррӑн сывласа илнӗ. Ыттисем хуллен вӑрҫнӑ.

Таҫтан хыттӑн, ҫиленсе кӑшкӑрни илтӗнсе кайнӑ.

— Пулӑшу илтӗм—ывӑл урине ватрӗҫ... тенӗ.

— Петӗре вӗлерсех пӑрахрӗҫ!..

Кӑшкӑрнисем кумай пулнӑ, вӗсем ҫынсене хӑлхисенҫен ҫапнӑ, ҫав та ҫас кайалла йантраса тӑракан сасӑсем кӑларса йанӑ та, ҫав хытӑ сасӑсем ҫынсен ҫиленес шухӑшне вӑратнӑ, вӗлерекенсенҫен сыхланма кирли ҫинҫен аса илтернӗ. Шурӑлса кайнӑ питсем ҫинҫе тем шухӑш тытни палӑра куҫланӑ.

— Йулташсем! Епӗр ҫапах та хулана кайӑпӑр... тен мӗн те пулин тӑвӑпӑр. Айӑр, пӗҫӗккӗн-пӗҫӗккӗн!

— Вӗлерсе пӗтерессӗ...

— Тавай салтаксене калӑпӑр... тен вӗсем халӑха вӗлерме саккун ҫуккине ӑнланса илӗҫ!

—Тен пур... Ӑҫтан епӗр пӗлетпӗр?

— Кам пирӗн майлӑ? Кам пире хирӗҫ? тенӗ.

Халӑх хуллен, анҫах пӗр ҫарӑнмасӑр улшӑнса, ҫӑн-ҫӑн халӑк кулса кайнӑ. Ҫамрӑксем пӗҫӗк-пӗҫӗк ушкӑншарӑн саланнӑ, вӗсем пурте мӗр йенчелле, каллак ҫырма патнелле утнӑ. Пурте аманнисене, вилнисене йатнӑ, ӑнӑ йун шӑрши кӗнӗ, йӑнӑшнисем, сӑмахласа илнисем илтӗннӗ.

— Ҫимӗн Йаккуне лап ҫамкаран...

— Ҫпаҫҫипӑ патша эттене!

— Ҫапла-а... Тухса илҫӗ! тенӗ.

Пӗр виҫ-тӑват вирлӗ сӑмах йантраса кайнӑ. Пӗр ҫӗрӗк сехет маларах ҫавӑн пек пӗр сӑмахне каланӑ пулсассӑн та, халӑк ҫинниве татса ҫурса пӑрахнӑ пулӗҫҫӗ.

Пӗр пӗҫӗк хӗр аҫа ҫупса ҫӳресе пурне те:

— Аннене курмарӑр и? тесе кӑшкӑрнӑ.

Ҫынсем пӗр ҫӗнмесӗр ҫаврӑна ҫаврӑна пӑхнӑ та, ӑна ҫул панӑ.

Унтан ҫӗмрӗк алӑллӑ хӗрарӑм сасси:

— Кунта, кунта епӗ... тенӗ.

Урам хушши пушанса пыва. Çамрăксем утнăçем хытăрах утса кайнă. Çулланнă çынсем те, çамрăккисем хыççăн куç айĕн пăхса, таçта икшерĕн, виçшерĕн,васкамасăр, салхуллăн утнă. Пуртĕ кашни мĕн шухăшланине пĕлмĕ... Хăш ҫухне авҫах, кам та пулин, ăшҫик тăвăрланса çитнине тӳсеймесĕр, хуллен çапла калать:

— Халăха айаккалла тĕртсе йаҫĕç пулаӗ ĕнтĕ?..

— Ылханлă пулҫăр çын вĕлерекенсем! тенĕ.

Вĕлерпĕ çынĕсене шеллевĕ, çавăн пекех тата пĕр йăвăр, ҫуралла шухăш вилнине сиснĕ те, ун çинҫен шарламасăр тăнă, ăшри хуйхăпа çиле тапратас мар тесе, хăлхана ҫавакан йата та текех асăнман...

Тен тата, вилни вырăнне урăх туса йарасран хăранипе те ун çинҫен шарламан пулĕ... Ф. Фоминапа Хумма Çеменĕ куçарнă.

**Йăван Муҫи.**

# Тĕшмĕшсем.

Ҫипер çывăрса выртнă çĕртех Ухливан муҫи хăйĕн çумĕнҫе çывăрса выртакан карҫăкне хĕнеме пуçларĕ. Ҫышаӗ те ҫышаӗ хăйĕн мăн ҫышкисемпе арăмĕн сулахай йенҫи айак пĕрҫинҫен. Çиленсех ҫышаӗ. Арăмĕ сасартăк вăранса карĕ. Çӳçпуçсене салатса йанă.

— Ах, мĕн пулҫех, Ухливан? Ай-уй, тăна кĕр! Мĕн ухмахланса выртатăн? Тилпĕрен çирĕни мĕн? Мĕн... мĕн турăм еп сана а? Тесе уласах йĕрсе йаҫĕ.

Çук. Ухливан нимĕн те илтмест—ҫышаӗ те ҫышаӗ Укахви йенне лле. Укахви, çтена çумнех лăпҫăнса выртрĕ. Халĕ ĕнтĕ Ухливан ҫышкисем Укахвийе тивеймеççĕ, тӳшеке кăна тивеççĕ.

— Мĕн... усал йерҫи мĕн кăна. Тур çырлахах. Микул турă, мăн турă, амăшĕ, хута кĕрсе пырах!

Пăхаӗ Укахви инке: Ухливан куçне хупнă, тугисемпе темĕскер мăкăртатаӗ, кĕлетки кăрт-карт туртăнкаласа илет.

— Ухливан, мĕн хăтланан? Тăрха, тăр! Турруна асăн, тет карҫăк упăшкине силлесе, тăр тетĕп!

Улихван муҫи вăранҫĕ. Йĕри-тавра пăхкаласа илҫĕ, куçĕсемпе тавама шыраӗ: хăй хупхура тара ӳкнĕ. Ларнă çĕртех сăхсăхма тапратрĕ. Карҫăкĕ йăпшăнса хуллен калаӗ:

— Мĕн пулҫĕ ара сана Улихван? Усал хăратри мĕн? Выртнă ҫухне турра пуççапма маннă, çавăнпа вăл. Пĕркунне те епĕ çавăн пек, турра пуççапмасăрах çывăрса кайнă та, çĕрĕпе асапланса выртрăм. Турра манма йурамасӗ...

— Тĕлĕк куртăм. Хăрушă тĕлĕк. Вăрманта пек. Вăрманĕ илемлĕ. Йăвăçсем шултра, темиçешер хăлаçлисем те пур. Хăшĕн-хăшĕн тăррисем пĕлĕт патне çитеççĕ. Мăн улмуççисем пур. Улмисем çăкăр пек. Йăвăçсем хӳтлĕхĕнҫе темĕн тĕрлĕ кайăк кĕшĕксем йурлаççĕ. Йуррисем пит илемлĕ, анкĕл йуррисем пекех. Мăн йăвăçсенҫен пĕри пит килĕштрĕ мана. Тавай, касас кăна, касса антарсан вутăран хаҫхи пек антрамăпăр, тетĕп. Калаӑ—тунă. Пурти хам хыçрах. Татратрăм çав йумана касма. Касатăп-касатăп, касатăп-касатăп, касăлни курăнмасӗ. Мĕнле йăвăç пулҫĕ ку,—каремет йуманĕ пулĕ пули авҫах, тесе шухăшласа тăраттăмҫĕ... Сасартăк хыçалалла çаврăнса пăхрăм та, Упрама курах карăм,—ташласа кăна тăраӗ ватăскер. Мана курсан ташлама ҫарăвҫĕ—имевҫĕ пулмалла.

— Пӑхха, пӑхха, тет, мана,—куратни? Ав, ҫӗнӗ хупах туса лартнӑ. Кайса пӗрер ҷеркке ӗҫетпӗр пуҷ, арӑмсем кураҷҷӗн, тет.

— Тӗлӗкре те пире улталасшӑн, терӗ кӑна хирӗҫ Укахви инке ҫиленсе.

— Иурӗҫке, тет хирӗҫ упӑшки.—Тархасшӑн сӑмаха ан пӳл. Хӗрарӑм ҫав, ҷӗлхипех. Игле!.. Ҫапла!.. «Пӗрер ҷеркке ӗҫетпӗр пуҷ. Ерехне укҫасӑрах параҫҫӗ» тет мана Упрам. Иурӗ, кайӑпӑр, терӗм еп те ӑна хирӗҫ.— Укҫасӑрах пулсан ма ӗҫес мар? Карӑмӑр. Елӗр ҫитнӗ ҫӗре пӳрт алӑкӗсем йарр! уҫӑлса карӗҫ. Кӗрегпӗр ҫӗнӗ пӳрте. Ӑшҷиккисем шап-шурӑ та ҫап-ҫутӑ. Ҫынсем ҫук. Хупах хуҫи пире курсан:

— Килӗрех, тӑхлаҷӑсем! ҫӗнӗ пӳрт тунӑ йатпа сире укҫасӑрах ӗҫтерӗп. Ман ерех нумай. Ӗҫесси ӗҫӗр те, анҷах ҫӗре ан тӑкӑр, тӑксан... шӑрттан тӑвӑп сиртен, тет пӳрнипе йунаса.

Кӗрсе лартӑмӑр Упрампа сӗтел хушшине, хуҫасем пек, сарӑлса. Тытӑнтӑмӑр ӗҫме. Ҷеркине тута патне илсе пырса йалт! йӑвантарса хутӑм. Ман ерех пӗтӗмпех, ҫӑвара кӗрес вырӑнне, хӗве йухса анҷӗ. Пӑхатӑп Упрам ҫине. Вӑл ҷип ҷиперех ӗҫет, ӗҫет те ҷӗлхипе ҷӑл туса илет—пиг тутлӑ пулмалла ерехӗ. Мӗн тӑвас? Манӑн та ӗҫес килет. Ҷепӗр ҷеркке тултартӑм та каллех йалт! туса хутӑм. Ҫав ҫавах. Пӗтӗм ерех хӗве йухса тухрӗ. Пӗтерет мана хупах хуҫи куншӑн, тетӗп. Пӑхатӑп хупах хуҫи йенелле. Вӑл ҫаннисене шӑнкартнӑ, куҫӗсенҷен вут тухат̆, шӑлӗсене кӑҷӑртаттарат̆, шуйттан пекех.,—А, есӗн? Ман ерехе тӑкма, тет хайар сасӑпа». Пӗрех ҫутӑлтарса йаҷӗ. Мӗн тӑвас тетӗн—ҫапат̆ те ҫапат̆. Кӑшкӑрас—сас тухмаст̆. Мӗн пулӗ—мӗн килӗ, терӗм. Йара патӑм хирӗҫ ҷышкӑсене ҷӑмӑртаса. Ҫапап та ҫапап, ҫапап та ҫапап. Хура тара ӳкрӗм. Есӗ вӑратман пулсассӑн вӗлерсех пӑрахнӑ пулӗттӗм. Латнӑ ес вӑратрӑн. Упрамӗ, епӗр ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра, таҫта тарнӑ. Пӑхкаларӑм та, тупаймарӑм,—«йулташ» те ӗнтӗ ӑна ҫавӑн хыҫҫӑн! Кун пек тӗлӗк халиҷҷен те курман.

— Нимӗн калама та пӗлместӗп. Ку тӗлӗк ырра мар. Тӗлӗкре ерех ӗҫсен хуйхӑ пулат̆ теҫҫӗ, тет карҷӑкӗ.

— Ерехне ӗҫеймерӗм ҫав. Ӗҫнӗ пулсан... Хуйхӑ марха... Ку тӗлӗк вилӗ пулассине пӗлтерет. Тӗлӗкре шурӑ пӳрт курсан, кил-йыш катӑлассине пӗлтерет, теҫҫӗ. Тата мана хӗнерӗҫ. Тӗлӗкре пӗрпӗр ҫын хӗнесен, тӗлӗк куракана ҷирлет, теҫҫӗ. Малтан ҷирлесе выртмалла пулат̆, унтан вилмелле. Пӗтрӗм, тӗлӗк пиркийӗх пӗтрӗм! Ав, виҫӗмкун каҫ шӑшисем ман ҫӑм атта ҫиме пуҫланӑ. Шӑши тумтир тавраш ҫисен каллех ырра мар. Иртнӗ тунти кун каҫ Хӗлӗп хӗрлӗ йӑтти пирӗн йенелле пӑхса улат̆ҷӗ. Тата...

— Иртнӗ ернере тата хура ҷӑхӑ, леш, пӗлтӗр пусарса кӑларни, хупӑсӑр ҫӑмарта тунӑҷҷӗ. Вӑл та ырра мар, тет Укахви куҷанса.

— Мӗн тӑвас? Вилмеллех пулат̆ пуҷ ӗнтӗ. Анҷах... Карҷӑк, ку тӗлӗк ес вилессине пӗлтермести? Шурӑ пӳртре пулнӑҫке епӗ. Есӗр шурӑ тӑхӑнса ҫӳреттӗр. Шурӑ пӳрт хӗрарӑм вилессе пӗлтерет пуҷ, тет Ухливан йӑпшӑнса.

— Мана вӗлерессипех сан! Хӑвӑн вилӗмне ман ҫине сирсе йараесшӑнни? Мурӗ! Анҷах еп вилместӗп, есех вилетӗн, турӑ ан калатӑр та вилме. Есӗ вилсен ман тӑлӑха йулмалла пулат̆. Пӗтрӗ вара ман пурнӑҫ.

— Ҷӑнах та епек вилетӗп пуҷ ҫав. Пӳрт ӑшҷиккине еп кӗлӗҫке.—Ку тупӑка кӗмеллине пӗлтерет, тет Ухливан сӑмси тӑррине хыҫса.

— Сӑмса тӑрри кӗҫтети мӗн, тесе кӑшкӑрса йаҷӗ Укахви аллисене шарт! ҫапса.—Ай, Ухливан, ҷӑн ҷӑнах пӗтрӗмӗр. Мӗн пулӗҷ ӗнтӗ ку? Сӑмса тӑрри кӗҫӗтсен ҫын вилет, теҫҫӗ. Мӗнле ҫын ҫав ес, Ухливан. Хӑвна ху пӗтеретӗн. Кӗҫӗтнӗ пулсан та хыҫма йурамаст̆ҷӗ. Сӑмсу пиркийӗх пуҫва ҫийетӗн. Ҫук, капла йурамаст̆. Каремет ҫиленнӗ пуҷ. Ипаласем кайса пӑрахмалла нумай пулат̆. Кайса пӑрахас. Тӑр ӗнтӗ ҷасрах вырӑн ҫинҷен. Хӗвел ирхи апата ҫитнӗ.

Укахви ҫӑм атӑ тӑхӑнса тулла тухса карӗ. Ухливан пӗҭҭенех йулҭӗ. Пӗҭҭен йулмасӑр,—вӗсен аҭа-пӑҭӑ ҫук. Пулнӑҭҭӗ те, пурте вилсе пӗтнӗ Ватӑлӑхра старикӗсене пӑхса усрамаллӑх аҭксем те пурӑнайман.

Тӳшек ҫинҭен анма хӑтланса урисене ҫӗрелле йаҭӗ.

— Ҭи малтан сылтӑм ура ҫине тӑрасха, унсӑрӑн кунӗпе йатлаҫса ҫӳремелле пулӗ. Хӑшӑҭҭӗха манӑн сылтӑм ура?

Е, кунҫ! Вӑт, ҫапла!

Ҭӳреҭерен ирхи хӗвел йӑлтӑртатса савӑнӑҫлӑ пӑхат̆, кулнӑ пекех.— Ухливан тӗшмӗшленнинҭен кулат̆ пулмалла. Ҭӳреҭе умӗнҭе салакайӑксем ҭӗрiклетеҫҫӗ. Кӑвакарҭӑнсем кули куҭ тесе пӗрпӗрне аҭашлаҫҫӗ. Сурӑхсем макӑраҫҫӗ, кӗтӗве кайасшӑн пулмалла, тет вӗсен хуҫи Ухливан. Ҫӳлтен, маҭҭа ҫинҭен, пӗр таракан ҫат татӑлса ӳкрӗ Ухливан пуҫӗ ҫинех.

— «Ах, есрелӗ!.. Темме таракансем хунаса карӗҫ кӑҫал? Ку —каллех ырра мар. Вут-кӑвар пуласса вӑл. Ҫунса кайсан ҭӗрӗллех тупӑка кайса вырттӑ пулат̆ вара. Шухӑшлалӑн шухӑшлатӑн та, пуҫ анкӑ-минкӗленсе кайат̆. Ҭан ҫапнӑ ҫӗрте тӑнӑ ҭукнехи пек. Капла йурамӗ. Пайанах Толик варне кайса киреметe ҫураҫтарас. Ҫуран кайсан инҫерех ӗнтӗ. Лашапах кайас куҭ».

Урине сырса пӗтерҭӗ. Пӑхат̆ Ухливан—ҫӑпата кантри хыҫалтан сыхӑннӑ.

— Капла йурамаст̆, тет Ухливан пуҫӗсене сулса —ваттисем каланӑ тӑрӑх, ҫула кайнӑ ҭух ҫӑпата кантри малалла сыхӑнсан телей пулмалла, хыҫалтан сыхӑнсан ӗмӗтлени пулмаст̆. Мана телей пултӑрха, капла йураймӗ, тесе урисене салтма тапратат̆.

Сылтӑм урин ҭи ҫӑпата кантри пӑртакҫӑ кӗскерех пулнӑ мӗн, нийепле те сыхӑнаймаст̆ малалла. Пӗрик вершук анҭах вӑрӑмрах пулмалла пулнӑ мӗн те. Туртат̆, туртат̆ Ухливан кантрисене, нийепле те ҫитереймест̆. Хӑрах аллипе тӑлнсене тытса уксаклаcа кайат̆ кӗтесселле, кӗр ҫиппи ҫумхи шырама. Тупрӗ. Ҫумхине сӳткелесе ҫиппине шӑлпа татса илҭӗ. Кантрасем сыхӑнҭӗҫ. Малтанах сыхӑнҭӗҫ. Халӗ ӗнтӗ ҫула кайсан та хӑрамалли ҫук. Пит ҫӑвасси анҭах йулҭӗ. Витререн йӑвӑҫ куркапа шыв ӑсса илҭӗ, шывне ҫӑвар тулли йех сыпса илсе пӗҭӗккӗн уҫӑ ҫине йарса, малтан аллисене, унтан питне куҫне ҫума тапратрӗ. Шывӗ сивӗ, ҫӑвара сыпмалла та мар.

— Каларӑм карҭака, ҫав мӑн пусӑран шыв ан ӑс, тесӗ. Итлемест̆. Хӗрарӑм вӑл йанта пӑхат̆. Шывӗ инҫе мар тесе, ҫав пусӑранах ӑсат̆. Йурат̆и апла? Вӑл ҫӑлри шывӑн турри пит хайар: шывне ӗҫсенех сивве йертет. Ак, халӗ те... тӳрех шӑла тытрӗ.

Пӑта ҫинҭе ҫакӑнса тӑракан алшӑллийе илсе пиҭӗ куҫӗсене, пӳрнисене шӑлса типӗтме пуҫларӗ. Пӳрнисене шӑлнӑ ҭух сасартӑк пӳрне ҭӗрнисем ҫине шурӑ тухнине курҭӗ. Ана курсан, малтанах хӑраса ӳкрӗ, унтан лӑпланҭӗ. А, ку йурат̆ха: пуҫ пӳрнен ҭӗрни ҫине шурӑ тухсан, телей пулат̆ теҫҫӗха. Ку вӑтам пӳрнен ҭӗрни ҫине ма тухнӑха? Ку хуйхӑ пуласса темесҭӗҫи ҫав? Тепӗр алӑри каҭа пӳрни ҭӗрни те шуралнӑ.—йуратни пурри пӗлтерет. Ӑҫтан ман, ватӑскерӗн, йуратни пулма пултарат̆ Ҫынсем кулсах вилӗҫ пӗрпӗр хӗрарӑм мана йуратса пӑрахсан. Ак, тата сылтӑм хӑлха йанрат̆. Ку ырӑ сӑмах илтессе. Тӗлӗкре пӗрле ҫӳренӗ Упрам килсе ырӑ хыпар пӗлтерихха..

Кӗтесри турӑ умне ҭӑркуҫлансах ларҭӗ те, ҫӳҫне-пуҫне шӑлса илсе тапаратрӗ пуҫҫапма, ирхи кӗлӗ тума.

— Ей, турӑ, турӑ амӑшӗ, Микул турӑ, пур усал тӗсӗлтен те хӑтарат̆ тӑр ман, Христус турӑ, есӗ хӑвӑн аннӳне кӗл тусам. Вӑл санран аслӑрах, мана вилӗмрен ҫӑлма пултарӗ. Пур ҫӗрте те, вӑрманта та, килте те, телейлӗ кулам. Ырсем, есӗ ӗге, хӗртсурт, ан пӑрахӑр Хайар киреметсем, ман ҫийе хайарӑн ан пӑхӑр, ӗнре епӗ йусман ҫитерӗп.

Турра пуҫҫапса тӑнӑ ҫӗртех, кӗлӗ сӑмаххисене шыранӑ вӑхӑтра темиҫе хут та хыҫал йенчи таҭка ӳтне хыҫса илҭӗ. Йулашкинчен урамри ҭӳреҭе

Ҫеннелле пăхрĕ. Урамра вўршĕри Уртеми Ĭыхи выҫаса ҫўрет. Ку Ĭыха ҫă-мăр пуласса выҫат, терĕ те, каллех пуҫҫапма тапратрĕ. Ҫĕре ўксех пуҫҫапат.

Нумай пуҫҫапри вăл, сахали ун ҫинҫен каламасан та пырĕ. Ҫав вă-хăтра унăн арăмĕ ҫимеллисем хатĕрленĕ—ҫăкăр каснă, тултан уйран илсе кинĕ.

Ларҫĕҫ ҫиме. Шăп. Нимĕн те ҫĕнмеҫҫĕ. Иккĕш те тĕлĕк ҫинчен, вилĕм ҫинҫен шухăшлаҫҫĕ. Шăвасем йавăҫса ҫўреҫҫĕ. Пĕр шăви, хăйуллăраххи Ухливана аптăратса ҫитерне: пит ҫине те ларса пăхат, алли ҫине те лар-ма хăтланат, йулашкинҫен Ухливанăн лапҫăк сăмси ҫине улăхса ларҫĕ

ҪĂВАШ РЕСПУПЛЕКĔНҪИ X ПАРТКОНФЕРЕНТСИ.



Партконференцсине Улатăр уйесĕнҫен килнĕ телекатсем.

карҫех. Ухливан ăна ҫат тугарҫĕ—сăмси ыратсах карĕ. Ҫапах та йăлăх-тараки шăна вилҫĕ—вилҫех. Урисене ҫўлелле тăратнă, мĕскĕн, хуокал-касĕ те.

— Манăн та ҫаплах вилмелле пулиха? Вырт вара тупăкра, пĕҫҫўсене тăратса, тет Ухливан йăвăрăн сывласа.

— Калас мар терĕм те, терĕ Ухливана карҫăкĕ, ĕнер епĕ ирех ҫăх-ҫĕпсене апат пама тухрăм. Пăхатăп: пĕр ҫăххин хўри вĕҫне улăм пĕрҫи ҫыпăҫнă. Ҫын вилессе вăл. Ҫасрах киремете ҫураҫтарас пулат. Ахалĕн пĕтет-пĕр епĕр.

— Хамăта ҫапла шухăшлап ҫав. Пайан кайас. Лашапах кайас, тетĕн. Лаша пур ҫинҭе мĕн ҫуран ҫӳремелле. Ҫисе тăрансан, хатĕрлеха ес мĕн кирлисене...

Карҭăкпа старик ҫиме ларнă ҭухне ваттисене асăнма манса кайнă.

— Ара, терĕ карҭăкĕ сĕтел хушшинҭен тăрса, епĕр ваттисене манса кайнис. Аҫтан телей пулĕха капла пире?

Пĕҫҫисене шарт! ҫапрĕ. Пуҫне сулкаласа тапратрĕ карҭăк васкаса ҫăкăр касма. Пĕр ҭăл касса илҭĕ те, ăна уйран ăшне ҭиксе кăларҭĕ. Унтан темĕскер мăкăртаткаласа ҫав ҭĕле алăк патне, ҫӳп-ҫап ăшне, кайса пăрахрĕ йулашкинҭен:

— Ҫийĕр, ваттисем! Пирĕн пулсан—сирĕ те пулĕ. Ан ҫиленĕр, терĕ хыттăн сăхсăхса.

Карҭăк сăхсăхасса ҫынсем пек мар, пит хăвăрт, васкаса сăхсахаӗ,— пĕлмен ҫын курсан ку шăна хăвалаӗнс, темелле.

* * *

Ҫисе тăраннă. Карҭăкĕ пыр йарăннипе ийук! текелесе илет, Ухливан ҫăкманне тăхăнвă, ҫĕлĕкне шыраӗ, Ай, уй! терĕ карҭăкĕ.—Ухливан, мĕнле ес? Ара сан кĕрĕк арки таврăнса кайнă. Кампа вăрҫасшăн ес? Манпа вăрҫасшăни? Ухливан айăпа тухнă ҫын пек пулса, сăкман аркисене тӳрлетет.

Ҫĕлĕкне тупрĕ.

— Ну, еппин, еп лашине кайса кӳлемха. Ес кирлисене хатĕрле, терĕ те васкаса алăкне уҫса йаҭĕ.

Алăк урлă каҫнă ҭух, сылтăм ури алăк хушшине пулҭĕ.

— Ку, каллех, ҫын килессе. Ах, ку ҫынсемпе—ҭăрмантарса кăна ҫӳреҫҫĕ. Мĕн тăвас вĕсемпе?

Хĕвел ирхи апата ҫитнĕ. Уйар. Ним пĕлĕт татăкĕ те ҫук. Кураксем как-как! тесе пĕрпĕрипе калаҫаҫҫĕ. Ухливан муҭин ват йăмрисем ҫинҭе кашни ҫулах курак йăвисем нумай пулаканҭĕ кăҫал, темме, курак йăвисем сахалрах. Ҫуркуннесемех Ухливан увшăн хуйха ӳкнĕҫҭĕ те... Кураксем килрен писсен, телей тараӗ, теҫҫĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл ун ҫинҭен шухăшлама пăрахнă. Ҭĕкеҫсем йавăнса ҫӳреҫҫĕ. Вĕсем Ухливанран хăрамаҫҫĕ те, Ухливан пуҫĕ ҫинҭенех вĕҫсе кайаҫҫĕ. Салакайăксем ҭăлик ҭăлик тесе йăлт-йалт вискелеҫҫĕ. Пур ҭĕрĕ ҭун та савăнаӗ. Ухливан муҭи анҭах ăна снсмест. Ҭĕрĕ ҭун савăнни ун кăмăлне каймасӗ. Ав, урамра пускил ҫынвин хура йăтти ăш ҫанталăк пулнăшăн савăннипе йăл йалт йăванкаласа илет. Ухливан: ку йăтă ҫăмăра йăванатха. Мĕн тăвас халĕ ҫăмăрпа? Каҭҭасене ҫитĕнмеллĕх уйар ҫанталăкĕ те кирлĕ пулаӗ, йаланах ҫăмăрпа мар... тет юăмарса. Ҫавăнтах тата сысна, ҫурăллă сысна, ҫурисене ҭĕнсе нăрикле́тсе ҫӳрет.

Ухливан шухăшĕпе ҫав сысна нăриклетни те пустуйа мар, сысна вăл ҫанталăк сивĕтессе нăриклетет.

Витерен лашине ҫавăтса тухрĕ. Лаши, витере тăрса йăлăхнăскер, карăнса илҭĕ,—уҫă сывлăша тухнăшăн хĕпĕртерĕ пулмалла. Ухливан кунта та тĕшмĕш тупрĕ.

— Инкек хыҫҫăн инкек пуласса кĕтсех тăр. Мĕн карăнатăн, вăрра кайасшăни мĕн, тесе ҫат тутарҭĕ ҭĕлпĕрпе лаши йапаххинҭен.

Лаши мĕншĕн ҫапнине туйса илеймесĕр тулхăрса илҭĕ. Ухливан каллех мĕскĕн лашине ҫапаӗ, ун шуҭĕпе лаша тулхăрсан ҫăмăр пулмалла...

* * *

— Ну, кайас пуҭ, терĕ Ухливан васкаса пӳрте кĕрсе. Ес, карҭăк мĕн кирлине хатĕрлерĕни ҫак? Аҫтаха ман ҫав...

— Хатĕрлерĕм. Хăмла илтĕм, ҫу, салат, ҫăкăр, паранкă, 3 пус укҫа. Ак, тыт. Лайăх тутăрпах ҫыхрăм.

Тутрине кăсйине ҭикрĕ Ухливан. Кайас умĕн турра пуҫҫапрĕ.

— Тăхтаха, тет карҫăкĕ.—Çул çинҫе усал тĕлне пулмалла ан пултăр
Вĕрсе йарас марм сана?

Çўп шăтăкĕнҫе тăракан кынҫăклă шăпăра илсе, пĕр курка шыв йăтса
Ухливан умне пырса тăҫĕ. Ухливан кукленсе ларҫĕ. Карҫăкĕ шăпăр витĕр
пĕрĕхсе, тапратрĕ мăкăртатма:

Çитмĕл тинĕс уттинҫе
Ылтăн шăллă карҫăк пур.
Аслă кинемей мунҫинҫе
Вăрăм çўçлĕ пĕри пур:
Имлет, йумлаť (?) кăлараť.
Çил вĕртĕр, шăпăр шăлтăр
Вĕрет, сураť, шăхăраť
Йур çутăр, çĕр çурăлтăр.
Вăпăр—вупкăн сирĕлех—
Манăн ҫĕлхе уçăлҫĕ
Тип ийе çухалах
Сантан тăшман тарҫĕ.
Ухливан кĕлн çырлахтăр (?)
Ҫавка хуралçи хурлантăр.
Çил вĕртĕр, тăм шăнтăр,
Усал—тĕсел сирĕлтĕр....

Ухливан пĕр тапранмасăр лараť. Карҫăкĕ сивĕ шывпа пĕрĕхсен те,
вырăнтан хускалмасť, куçĕсене хупса кăна илет. Мăкăртатсан, мăкăртатсан
карҫăк:

— Ну, йурĕ, тăрах ĕнтĕ, терĕ.

Ухливан тăраť мĕшĕлтеткелесе. Ҫĕркуççисем ыратаççĕ. Ватăлнă ĕнтĕ!..
Шыв нумай пĕрĕхнĕрен куçĕсем кĕçтме пуçланă.

Ухливан хура аллисемпе сылтăм куçне лутăркаť. Карҫăкĕ йатлаçма та
тапратрĕ:

— Мĕн ес? Куç кĕçĕтнипех сан!.. Ма хыçан! Сулахай куç кĕçĕтсен макăрасса, теççĕ. Санпала!..

— Сылтăмми кĕçĕтрĕнç. Сулахайĕ кĕçĕтне пулсан епĕ хыçмастăмҫĕ те.
Ăна ес вĕрентмесĕрех лайăх пĕлетĕпçке. Ан куҫан пусгуй, тет Ухливан
çиллевсе.

* * *

Аран-аран килтен тухса карĕ. Арăмĕ хапха алăкне хупса йулҫĕ.
Лашийĕ малтанах ҫупасшăн мар. Ухливан пушăпа çат çапаť. Лаши хўриесе
не çавăрса илет те лăпăс-лăпăс ҫуккаласан каллех ҫарăнса лараť. Ухливан—кайасшăнах мар ман лаша, усалла сисети мĕн, тет. Хапха алăк çывăхĕнҫе пĕҫĕк ĭыха. амĕш çывăхĕнҫе, йăлт-йалт синкелет. Ухливана ку та
килĕшмест: çăмăр пуласса ку, тет. Шур курак вăрăмăн кăшкăрса аватаť—
каллех ку çăмăр пуласине пĕлтерет. Çăмăрҫен кайса килесҫĕха тесе, лашине хытăрах хăваласť. Çанталăк лайăх. Ыраш уйĕ сип симĕс лараť.

Йăрансенҫе, тата çул тăрăх йешĕл курăксем хавасланса пăхса ларaççĕ,
хăшĕ-хăшĕ ҫеҫексем те кăларма пуçланă. Лашана пывине илтсен симĕс ыраш
ани хĕрисенҫен путенесем пăрр! вĕçсе тухса айакалла вĕçсе кайаççĕ. Тăрисем пуç тăррннҫе «çеçеттин, çеçеттин» тесе йурласа сывлăшра вĕçсе тăраççĕ. Пĕр кайăкĕ, темле кайăк вăл—ĕçле-ĕçле çи, ĕçле ĕçле çи, тесе йурлаť.
Илемлĕ çанталăк Ухливан ҫĕрине те хускатрĕ. Пуçне усса хуйхăрса çўресенскер, вăл та савăнăçлăрах пăхма пуçларĕ,—хуйхи-суйхине те манса карĕ.
Сасартăк пĕри:

— Тытсам лашуна! Мĕн улпут пек ларса пăратăн, терĕ.

Ухливан кăртах сикрĕ. Тăрантаспа пыраççĕ. Мушикĕ ларҫăк çинҫе,
пупĕ хыçалта сĕвенсе пыраť.

(малалли—vII хоппăн).

Иргсе кайма çул хӗрӗк Ухливан каҭҭана нумайӑх таптамалла ын пултӑр тесе, лашине пӑ так пӑрҭӗ те. лешӗм ирсе карӗç. Мушикӗн лашийӗ... лаши мар вӗср йӗ Ухливантан иргсе кайсассӑн утапа кайасшӑн пулҭӗ. Мушик ӑна шур патакпа çат тутарҭӗ. Ухливан ӑна курҭӗ те: ма çапан кӗерӳве шур патакпа—хӗсӗр пулаҭ, вӗт, тесе вӑл кӑрса йаҭӗ ҭӑгаймасӑр. Авҭах лашсем ылтеймерӗç,—вӗçте ҭӗç малалла.

Сасартӑк Ухливан хӑй çамкине çат ҫа са илҭӗ.

